# МĔН – ШИ ВĂЛ ТĂВАН ÇĔРШЫВ?

- **Чăваш Республики вăл – пирĕн Тăван çĕр-шыв.**
- **Тăван çĕр-шыва пирĕн юратмалла. Вăл пуян, хитре пултăр тесе тăрăшмалла.**

# Чăваш Республикин Гимнĕ

1. Çурхи тĕнче вăраннă чух.
Хаваслă кун шăраннă чух
Чун савăнать, чĕре сикет
Çĕршывăм çинчен юрлас килет.

Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Асран кайми
Юратнă çĕршыв.
Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Мухтав сана,
Çуралнă çĕршыв!

2.Яшсем-хĕрсем выляна чух,
Атте-анне ăс панă чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та нумай пурнас килет.

3.Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,
Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та хастар пулас килет.







1. Эпир мĕнле республикăра пурăнатпăр?
2. Чăваш Республики ăςта вырнаςнă?
3. Республикăн тĕп хули мĕн ятлă?
4. Раççейĕн тĕп хули мĕн ятлă?
5. Чăваш Республикинче миçе хула?
6. Пирĕн республикăн ялавĕ мĕн тĕслĕ?
7. Эпир пурăнакан хула мĕн ятлă?






Чăваш Республикинче тăхăр хула: Шупашкар (**442** пин çын), Çĕнĕ Шупашакар (**121** пин çын), Канаш (**57** пин çын), Улатăр (**48** пин çын), Çĕмĕрле (**43** пин çын), Куславкка (**13** пин çын), Сĕнтĕрвăрри, (**11** пин çын), Çĕрпӳ (**11** пин çын), Етĕрне (**11** пин çын).

# Çĕнĕ Шупашкар - Новочебоксарск

**Çĕнĕ Шупашкар – республикăри хуласенчен чи çамрăкки. Хула Атăл хĕрринче, Шупашкартан 10 çухрăм анатарах вырнаçнă.**



# КАНУ САМАНЧЁ



# КАНУ САМАНЧЁ



# Хисеп ячĕсем

23

1960

101

345

2010

3100

69

12372

178

Çĕнĕ Шупашкара 1960 çулта никĕсленĕ.

Çĕнĕ Шупашкара 1965 хула ятне панă. Кунта тĕрлĕ халăх çыннисем пурăнаççĕ: чăвашсем, вырăссем, тутарсем, çармăссем, украинецсем, еврейсем тата ыттисем те.






- Ҫӗнӗ Шупашкар республикӑн чи илемлӗ, чи хӑтлӑ хулисенчен пӗри.
- Хулара Атӑл ҫинче ГЭС туса хута янӑ.
- ГЭС плотини 4 ҫухрӑм тӑсӑлать.



